## Чĕрере

Пысăккине-и е пĕчĕккине —
Мĕнле çурта лартам-ши чиркӳре?
Çурта илетĕп кăмăл тунине,
Чи пысăкки — çунать ман чĕрере.

Ура çинче-ши е чĕркуçленсе
Кĕлтумалла халь манăн кунсерен?
Çӳлти Патшалăха ĕмĕтленсе
Чĕркуçленетĕп эпĕ чĕрере.

Мĕн-мĕн калас-ши манăн ӳкĕнсе?
Мĕнле сăмах тăрать-ши чĕлхемре?
Пин-пин сăмах калас-ши пикенсех?
Тен, виç сăмах çеç çитĕ чĕререн?!

Çилпе вĕçсе аланĕ самантрах
Вĕçсе тухни вылянчăк чĕлхерен.
Ырăлăхлă Турри пăхмасть сăнран —
Мĕн пуррине шырать Вăл чĕрере.

Пысăккине-и е пĕчĕккине —
Мĕнле çурта лартам-ши чиркӳре?
Çурта лартатăп кăмăл тунине,
Чи пысăкки — çунать ман чĕрере!

*Енĕш, В. Чĕрере : [сăвă] / В. Енĕш // Тăван Атăл. – 2002. – № 3. – С. 80.*